*Атран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

# Хресчен сасси

28 (2615) №
Хакĕ ирĕклĕ

2016 утă 21

1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

КĔÇНЕРНИКУН

ВЫРМА-2016

**ÇАК ЭРНЕ ПУÇЛАМĂШĔ ТĔЛНЕ РЕСПУБЛИКĂРИ УЛТĂ РАЙОНТА КĔРХИ КУЛЬТУРĂСЕНЕ ВЫРМА ТУХНĂ. УТĂ УЙĂХĔН 19-МĔШĔ ТĔЛНЕ ĔÇÇИЕ ТАТА САКĂР ХУÇАЛĂХ ХУТШĂННĂ.**

# Явапллă тапхăр пуçланчĕ



Сăнӳкерчĕке www.cap.ru сайтран илнĕ

Тунтикун Çĕрпӳсем кĕрхи культурăсене çулма тытăннă. Анчах кунта вырма ĕçĕ чылай маларах пуçланнă темелле. Утă уйăхĕн 12-мĕшĕнче Андрей Хорошавин фермер хуçалăхĕнче çу ӳсен-тăранĕсене пуçтарма пикеннĕ. Хуçалăхра кăçал шăпкан /рыжик/ 200 гектар йышăннă. Ĕç тăвакан директор Вячеслав Блинов палăртнă тăрăх – çак культурăна ӳстерме кăткăс мар. Вăл кирек мĕнле çĕр çинче те лайăх тухăçпа савăнтарать. Анчах ун çинчен пирĕн республикăра сахал пĕлеççĕ. Чикĕлеш енче вара унпа анлă усă кураççĕ. Пуçтарса илнĕ тухăçăн ытларах пайĕ шăпах Европа çĕршывĕсене ăсанать те.

Çак кунсенче А.В. Хорошавин фермер уйĕсенче "Безенчукская-380" сортлă кĕрхи тырра выраççĕ. Комбайнсен штурвалĕсене опытлă механизаторсем Юрий Клементьев тата Сергей Миронов тытса пыраççĕ. Валентин Изендеевпа Юрий Иванов водительсем тĕшĕленĕ тырра уйран автомашинăпа турттараççĕ.

Кăçал кунта кĕрхисене 1320 гектар çинчен вырса илмелле.

Çак районти "ВДС" пĕрлешӳре те тунтикун вырмана пуçăннă. Ĕçси тĕлне кунта 50 çын вырнаçмалăх çĕнĕ столовăй /3 млн тенкĕлĕх тăкакланнă/ хута янă. Тырă типĕтекен комплекса тĕпрен юсаççĕ. Вăл пĕр сехетре 50 тонна чĕртавар йышăнмалла. Строительство ĕçĕ пĕтĕмпе 10 млн тенке кайса ларать.

**Патăрьел** районĕнчи "Малалла" агрофирмăра çĕнĕ тухăçшăн кĕрешӳ утă уйăхĕн 15-мĕшĕнче пуçланнă. Чи малтанах кунта 30 гектар çинчи пăрçана вырма тухнă. Ун хыççăн кĕрхи тулă уйне куçнă.

**Елчĕк** районĕнчи Ленин ячĕллĕ хуçалăхра утă уйăхĕн 15-мĕшĕнче ертӳçĕсемпе фермерсем вырман тапхăрĕ пирки тĕплĕн канашланă. Тепĕр кун ĕçе пикеннĕ. Хальхи вăхăтра "Прогресс", "Победа", "Рассвет", "Комбайн", "Яманчурино", "Клевер", "Колос" хуçалăхсенче, "Нива" агрофирмăра тата ыттисенче ĕççи хĕрсе пырать. "Прогресс" пĕрлешӳре кăна кĕрхи культурăсене вырма 5 комбайн хутшăнать. Çĕнĕ тырра кĕтсе илме складсене, йĕтемсене юсаса йĕркене кĕртнĕ.

**Комсомольски** районĕнчи Ф. Г. Хайртдинов фермер хуçалăхĕнче тăрăшакан Александр Безрукин механизатор çак эрне пуçламăшĕнче комбайнне кĕрхи ыраш уйне кăларнă. Пирвайхи кун кашни гектар 28 центнер тухăç панă.

**Красноармейски** районĕнче вырма умĕн 14 механизатор "Е" категори илме "Нива" вĕренӳ центрĕн филиалĕнче экзамен тытнă. Вĕсем вырмара комбайн штурвалне çирĕп тытса пырасса шанаççĕ.

"Красное Сормово" пĕрлешӳ тата "Таябинка" агрофирма районта ĕççие ыттисенчен маларах пуçланă.

**Пăрачкав** районĕнче "Простор", "Россы Поречья", "КиПиАй Агро" хуçалăх механизаторĕсем чи малтан кĕрхи тырă пуссине тухнă. "Простор" пĕрлешӳ уйĕнче 5 комбайн ĕçлет. Пирвайхи тухăç гектартан 40 центнерпа, нӳрĕклĕхĕ 13,5 процентпа танлашнине палăртаççĕ. Кунта пĕрчĕллĕ культурăсене пĕтĕмпе 2400 гектар çинче вырмалла, çав шутра 1000 гектар – кĕрхисем. "Россы Поречья" хуçалăх вырмана 9 комбайн кăларнă. "КиПиАй" пĕрлешӳре рапс пуçтараççĕ.

**Канаш** районĕнчи Киров ячĕллĕ кооператив ĕçченĕсем утă уйăхĕн 18-мĕшĕнче вырмана тухса çак кун 71 çул тултарнă ертӳçĕне Николай Степанович Андреева савăнтарнă.

Вырма – явапллă тапхăр. Çĕр ĕçченĕ тăрăшса вăй хурсан тата çанталăк уяр кунпа савăнтарсан пӳлмене пахалăхлă тухăç кĕмелле.

**Ирина ПАВЛОВА.**

# Çуллахи ял вăййисенче

Саратов хулинче старта тухнă Пĕтĕм Раççейри ял спортсменĕсен çуллахи спорт вăййисем кăçалхипе вунпĕрмĕш хут иртрĕç. Чăваш Енрен унта 39 çын хутшăнчĕ, вĕсем ăмăртусенче спортăн вунпĕр енĕпе вăй виçнĕ. Пирвайхи икĕ кун кăтартăвĕпе пирĕн республика пухмачĕ тĕрлĕ йышши çичĕ медальпе пуянланнă.

Çемье командисенчен Йĕпреç районĕнчи Чăваш Тимеш ялĕнчи Калитовсем кĕмĕл медале тивĕçнĕ. Çавапа курăк çулакансем хушшинче Чăваш Ен команди 50 регионран иккĕмĕш вырăн йышăннă. Уйрăм çынсенчен Вăрнар районĕнчи Александр Политова çитекенни пулман. Ĕне сăвакансемпе механизаторсем те республика чысне хӳтĕлессишĕн тивĕçлипе кĕрешнĕ: дояркăсен команди пĕтĕмĕшле кăтартупа – çиччĕмĕш /48 регион хушшинче/, механизаторсен тăххăрмĕш /49 командăран/ вырăн йышăннă.

## Республика уй-хирĕнче
### (утă уйăхĕн 19-мĕшĕ тĕлне)

Сисмерĕмĕр те, кĕрхисене вырма та вăхăт çитрĕ. Республикăри Улатăр, Патăрьел, Вăрнар, Канаш, Куславкка, Комсомольски, Красноармейски, Муркаш тата ытти районта «сарă ылтăна» выраççĕ. Республикăра пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсем 292, 9 пин гектар йышăннă (2015 çулхин 102,7 проценчĕ). Çак вăхăт тĕлне тырă 1851 гектар çулнă, 1221 гектар çинчен вырнă. Гектарти вăтам тухăç – 27,2 центнер. Патăрьел районĕнче кăтарту 44 центнерпа танлашнă.

Хуçалăхсем кĕрхисем акма 50,1 пин гектар хатĕрленĕ. Утă – 90,1 пин (12562 процент), сенаж – 190,2 пин (111,9), силос 25,1 пин тонна (12,5) хатĕрленĕ.

**ХАКЛĂ ВУЛАКАНСЕМ!**

**«Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене II çур çулшăн çырăнма ĕлкĕреймерĕр пулсан – ан пăшăрханăр. Утă (июль) уйăхĕн 25-мĕшĕччен почта уйрăмĕнче е «Советская Чувашия» хаçатăн киоскĕсенче çырăнсан – вĕсене çурла (август) уйăхĕнчен илсе тăма пуçлатăр.**

КУН ЙĔРКИНЧЕ

# Çыхăну çирĕпленет, аталанать

**РФ Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Михаил Бабич тата Китай Халăх Республикин Патшалăх Канашĕн членĕ Ян Цзечи ертсе пынипе Чĕмпĕр хулинче канашлу иртнĕ.** Унта Раççейĕн Атăлçи округĕнчи регионсем тата КНРти Янцзы юханшывĕн Çӳлти, Вăтам юхăмĕсен регионĕсем "Атăл – Янцзы" форматпа çыхăну тытасси çинчен калаçнă.

Ларăва Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, ытти явапллă çынсем хутшăннă.

Раççейпе Китай хушшинчи çыхăнусем федерацин Атăлçи округĕнче 2013 çултанпа аталанаççĕ. "Атăл - Янцзы" формат кĕске вăхăтра килĕшӳ никĕсне йĕркелеме май панă. Паянхи кун çыхăнусем çирĕпленеççĕ, гуманитари тытăмĕнче вуншар инвестици проекчĕ пурнăçланать. Унсăр пуçне 60 проекта сӳтсе яваççĕ, çав шутра 20-ĕшĕ пурнăçланма тытăннă та.

Чăваш Ен ертӳçи пирĕн республика Янцзы тăрăхĕнчи регионсемпе хутшăнса ĕçленине палăртнă. Тĕслĕхрен, Чунцин хулипе тата Сычуань провинцийĕпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен калакан килĕшӳсене алă пуснă. Ĕнер Китай Халăх Республикин делегацийĕ Чăваш Ене килнĕ, вĕренӳ, сывлăх сыхлавĕн тытăмĕсемпе паллашнă. Чăваш патшалăх университечĕнче Китай культурин центрĕ уçăлать, Аньхой провинцийĕн кунĕсем иртеççĕ.

Михаил Игнатьев тата асăннă провинцийĕн кĕпĕрнатторĕн заместителĕ Лю Ли икĕ регион суту-илӳпе экономика, ăслăлăхпа техника тата гуманитари тытăмĕсенче çыхăну йĕркелес тĕлĕшпе килĕшĕве алă пуснă.

# Ĕç профессийĕсене алла илме

**Раççей Президенчĕ Владимир Путин çĕршывра ĕç профессийĕсене вĕрентекен çичĕ центр уçма икĕ миллиард ытла тенкĕ уйăрасси çинчен пĕлтерĕччĕ.** Вĕсем Тюмень, Мускав, Чĕмпĕр, Свердловск облаçĕсенче, Хабаровск крайĕнче, Тутарстанра тата Чăваш Енре уçăлмалла.

2015 çул вĕçĕнче республика 2016-2020 çулсенче вĕренĕве аталантармалли тĕллевлĕ программа мероприятийĕсене федераципе пĕрле пурнăçлама ирттернĕ конкурсра çĕнтерӳçĕсен йышне лекнĕччĕ. Çапла майпа центр йĕркелеме федераци бюджетĕнчен 141 млн тенке тивĕçнĕ. Вăл Шупашкарти электромеханика колледжĕ никĕсĕ çинче автоматизаци, радиотехника тата электроника енĕпе йĕркеленĕ.

ТĔРĔСЛЕВ

# Çапма пĕлмесен...

**Çапма пĕлмен пушă вĕçĕ хăйне пырса тивет тенĕ. Куславкка тата Патăрьел районĕсенчи шурлăхлă лаптăка типĕтсе усă курма хăтланни хуçисенех йывăрлăха кĕртсе ÿкернĕ.**

Куславкка районĕнчи пĕр çын 3-4 çул каяллах Пăрмас ял тăрăхĕн территорийĕнче уй варринче техникăпа канав чавма пуçланă. Çăлкуçран тапса тăракан шыв ун тăрăх çывăхри кÿлле юхса тухасса кĕтнĕ вăл. Никампа канашламасăр, хăй пĕлнĕ пек чакаланнă арçын. 1 метр сарлакăш, 1,2 метр тарăнăш канава 500 метра яхăн чавнă хыççăн тин йăнăшне ăнланса илнĕ. Пуçăннă ĕçе пăрахнă. Анчах тарăн канава хупласси пирки аса та илмен. Раççей ял хуçалăх надзорĕн Чăваш Енри тата Чĕмпĕр облаçĕнчи управленийĕн специалисчĕсем каланă тăрăх – çĕре 2 млн тенкĕлĕх шар кăтартнă. Тăпра пулăхне тавăрма 2 çул кирлĕ. Траншея уя икĕ пая пайланипе лаптăка йĕркеллĕ сухаласа акаймăн. Техникăпа çÿреме те кансĕр. Выльăх-чĕрлĕх кĕрсе ÿксен тухса пĕтеймĕ.

Валерий Новосельцев инспектор сăмахĕпе кунашкал ĕçе тытăниччен рекультиваци проекчĕ хатĕрлемелле пулнă.

– Тăкакĕ пысăк паллах. Анчах усси те пур. Унччен йĕпе тăнăран хăш-пĕр лаптăка акма-лартма çĕртме уйăхĕсĕр те кĕреймен. Шыв юхма канав тунă хыççăн усă курмасăр выртнă лаптăксене те пусă çаврăнăшне кĕртнĕ. Чăн та, эпир канава чылай тарăнрах та сарлакарах тунă, – каласа пачĕ Куславкка районĕнчи Иван Семенов фермер.

Патăрьел районĕнчи Çĕнĕ Ахпÿрт ял тăрăхĕнче вара 0,2 гектар çĕрĕн пулăхлă сийне вырăнтан куçарнă. Çакăн пирки прокуратура ĕçченĕсем управление пĕлтернĕ. Пĕрлехи тĕрĕслевре лаптăкра самай пысăк шăтăк асăрханă. Хуçисем кÿлĕ туса пулă ĕрчетме шутланă-ши? Чăн та, ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр çинче çапла тума юрать. Çапах кашни ĕçĕн хăйĕн йĕрки пулмалла. Çĕрĕн пулăхлă сийне куçаричченирĕк илмелле, проект хатĕрлемелле. Çитменнине ку лаптăк арендăра кăна-мĕн. Чăн та, тĕрĕслев органĕсем айăплама ĕç пуçарнине пĕлсен фермер шăтăка тултарса тикĕсленĕ. Анчах хура тăпра тăмпа хутăшнăран çĕр пулăхĕ палăрмаллах чакнă. Апла явап тытмах тивĕ унăн.

**Надежда ВАСИЛЬЕВА,
управлени ĕçченĕ.**



Куславкка районĕнчи канав

ЫЙТРĂР – ХУРАВЛАТПĂР

# Дача паспорчĕ кирлĕ-и?

**? Шупашкар районĕнче пĕлĕшрен дача илесшĕн. Анчах унăн кадастр паспорчĕ çук-мĕн. Унсăр вăл пирĕн харпăрлăх шутланĕ-ши? Документа мĕнле илмелле?**

**СЕРГЕЕВСЕМ.**

Кадастр паспорчĕсĕр участока приватизацилени саккунлă шутланмасть. Ăна илме йывăр мар. Çĕр кадастр палатин районти уйрăмне каймалла. Кадастр инженерне чĕнсе участок чиккисене палăртмалла. Унтан дача участокне патшалăх кадастр учетне тăратмалла. Хуçине кадастр паспортне параççĕ. Унта çĕр лаптăкне саккунпа килĕшÿллĕн приватизациленине палăртаççĕ.

# Чикке палăртмалла

**? Дача участокĕн чиккине палăртма кирлех-ши? Унпа вунă çул ытла ĕнтĕ усă куратпăр. Участоксен пĕтĕмĕшле схеминче ăна палăртнă.**

**Валерий АНТОНОВ.
Канаш районĕ.**

2018 çултан пуçласа чикке тĕрĕс палăртман участоксене сутма, парнелеме юрамасть. Нумай пулмасть вырăнти влаç органĕсем бюджет шучĕпе чикĕсене хăйсем тĕллĕн палăртма ирĕк илнĕ. Анчах вĕсем тÿрре килмесен те пултараççĕ. Кайран çухатнă лаптăка суд урлă тавăрттарма тивет. Çавăнпа кадастр инженерне хăвăр чĕнсе илсе чикке палăртнине, ăна документсемпе çирĕплетнине нимĕн çитмĕ.

# Туртса илесрен

**? Ял тăрăхĕ манăн пай çĕрне хуçасăр тесе йышăннă. Чăн та, юлашки çулсенче унпа усă кураймарăмăр. Çине тăнипе лаптăка каялла тавăрма май килчĕ. Кăçал пай çĕрне уйăрса чиккине палăртнă, анчах сухаласа акма-лартма вăй çитмерĕ. Ăна регистрацилесен те усă курманшăн туртса илмĕç-ши?**

**М. ВАСИЛЬЕВ.
Элĕк районĕ.**

Пĕрлехи харпăрлăхран пай çĕрне уйăрнă, чиккисене палăртнă пулсан вăл хуçасăр шутланмасть. Çапах сирĕн лаптăка уйăрассине вĕçне çитермеллех. Ун хыççăн харпăрлăх правине регистрацилемелле.

Енчен çĕрпе висĕ çул усă курмасан, çумкурăк айĕнче лартсан вырăнти влаç органĕ ăна туртса илесси пирки пĕлтерет. Эсир çакăнпа килĕшсен участока аукцион урлă сутаççĕ. Хирĕç пулсан администрацин сире ăна суд урлă суттарма ирĕк пур. Çапла ан пултăр тесен лаптăкпа тĕллевлĕ усă курмалла, вăй çитерейменсен ăна арендăна памалла.

САККУН

# Ют çĕр çинче – çурт

Шанма шан та тĕрĕслеме ан ман тенĕ. Республикăри пĕр районта пурăнакан Иванов (хушаматне улăштарнă) хăйне уйăрнă çĕр çинче тăрăшсах уйрăм çурт-йĕр çавăрнă. Йăла-йĕркепе çĕнĕ пÿрт ĕçкине кĕрлеттермелли кăна юлнă темелле. Анчах савăнас вырăнне кĕтмен пăтăрмах кил хуçисене пысăк хуйха кĕртсе ÿкернĕ.

Вырăнти хăйтытăмлăх органĕ ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр категорине улăштарса ял чиккине кĕртнĕ. Унтан ăна çурт-йĕр лартма уйăрнă. Пĕри Ивановсене те лекнĕ. Çĕр хуçисем унта савăнсах çурт-йĕр çĕкленĕ. Анчах строительство вĕçленсен ял тăрăхĕн ĕçченĕ йăнăшни, лаптăксене арпаштарни палăрнă. Çавна май çурт-йĕре пачах ют çын çĕрĕ çинче туса лартнă-мĕн. Лаптăкăн чăн хуçи – нумай ачаллă çемье. Вăл ăна харпăрлăха илнĕ иккен. Ивановсен вара – арендăра кăна. Çавăнпа лаптăксене улăштарма май çук.

Росреестрăн Чăваш Енри управленийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх – кун пек тĕслĕхсем республикăра час-часах тĕл пулаççĕ. «Çĕр участокне туяниччен малтан кадастр инженерне чĕнсе илмелле, вырăнта чикĕсене палăртмалла», – пĕлтерет управлени ертÿçин заместителĕ Татьяна Васильева.

Çĕр лаптăкне интернет урлă Росреестрăн кадастр карттипе те тĕрĕслесе пăхма пулать. Ку мел кадастр учетне тăратнă, чиккисене палăртнисемшĕн кăна юрăхлă.

Патăрьел енчи пĕр çынна газ пăрăхĕ участокпа усă курма чăрмантарнă-мĕн. Район сучĕ ыйтăва тивĕçтерменнипе ЧР Аслă судне çăхав çырнă. Хальхинче те выляса янă вăл. Чăн та, газ пăрăхĕ пахча урлă иртни çĕрпе тĕллевлĕ усă курма ниепле чăрмантарма пултарайман. Хальхинче хуçисен çĕр ĕçне тытăнмах тивет-тĕр.

ЦИФРĂСЕМПЕ ФАКТСЕМ

# Акнă-лартнă лаптăксем

(Чăвашстат кăтартăвĕпе)

Чăваш Енре мĕнпур категорири ял хуçалăх культурисен лаптăкĕ 576,3 пин гектар йышăннă (иртнĕ çулхин 100,5 проценчĕ).



Пĕтĕмĕшле акнă лаптăк 576,3 пин гектар




Хушма хуçалăхсем (ХХ) – 100,6 пин гектар.

Хресчен (фермер) хуçалăхĕсем (уйрăм пайтаçăсемпе пĕрле) (ХФХ) – 136,6 пин гектар.

Ял хуçалăх предприятийĕсем (ЯХП) – 339,1 пин гектар.

Республикăра 2016 çул валли ял хуçалăх культурисем акнă лаптăксен виçи:

| КУЛЬТУРА ТĔСĔСЕМ (пин гектар, 2015 çултипе пăхсан). | | | МĔНПУР КАТЕГОРИРИ ХУÇАЛĂХСЕМПЕ (мĕнпур категорири хуçалăхсенче процентпа) | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | | | ЯХП | ХФХ | ХХ |
| 292,9 | +2,7 | Тырă культурисем | 70 | 30 | 0,3 |
| 1,3 | + 0,2 | Сахăр кăшманĕ | 85 | 15 | 0,5 |
| 32,9 | -1,2 | Çĕрулми | 15 | 13 | 72 |
| 5,2 | +0,5 | Пахчаçимĕç | 7 | 15 | 79 |

Кăларăма Лариса АРСЕНТЬЕВА хатĕрленĕ.

# Тумла чула шăтарать

**Федерацин патшалăх статистика службин ертÿçи Александр Суринов Чăваш Енре ĕçлĕ çулçÿревпе виçĕ кун пулнă. Республика Пуçлăхĕпе Михаил Игнатьевпа тĕл пулса регионăн кăçалхи пĕрремĕш çур çулти социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвне сÿтсе явнă. Кусլавкка, Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи çырав объекчĕсене, инструктор участокĕсене çитнĕ, лару-тăрупа паллашнă. Александр Евгеньевич регионра паллă мероприятие лайăх хатĕрленсе пысăк шайра ирттернине, çыруçăсем яваплăха туйса ĕçленине палăртнă. Массăллă информаци хатĕрĕсенче ĕçлекенсемпе те тĕл пулса ыйтусене хуравланă.**



Сăнÿкерчĕке www.cap.ru сайтран илнĕ

### Налук хумаççĕ

Çырав çĕр ĕçченĕсене малалла аталанма çул уçса пани куçкĕрет. Акă 2006 çул хыççăн (юлашки çырав ун чухне иртнĕ – **авт.**) «АПК аталанăвĕ» наци проекчĕ хута кайнă. Республикăри аграрисем 26 млрд тенкĕ кредит укçине явăçтарнă. Çакă çĕр ĕç культурине палăрмаллах улăштарнă. Уй-хирте çĕнĕ йышши хăватлă техника хуçаланать. **«Ял хуçалăхĕнчи улшăнусен кăтартăвĕсем аграрисене ятран пулăшмашкăн тухăçлă мерăсем йышăнма кирлĕ»,** – палăртнă Михаил Игнатьев журналистсен ыйтăвĕсене хуравланă май.

**– Паян хушма хуçалăх тытса пыни предпринимательлĕх ĕçĕхĕлĕ шутланмасть, уншăн налук хывмаççĕ,** – тенĕ вăл граждансен икĕленчĕклĕ шухăшĕсене сирсе. – Пĕтĕм Раççейри ял хуçалăх çыравĕ çĕршыври хушма хуçалăхри лару-тăру пирки тĕрĕс информаци илме май парать. Çак материалсем апат-çимĕç хăрушсăрлăхне тивĕçтерме стратегиллĕ йышăнусем тума кирлĕ.

### Пурнăç таппинчен юлмаççĕ

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, Федерацин патшалăх статистика службин ертÿçи Александр Суринов, ЧР ял хуçалăх министрĕ Сергей Артамонов, Чăвашстат пуçлăхĕ Эльвира Максимова «Ольдеевская» агрофирмăра пулса унăн ĕçĕ-хĕлĕпе паллашнă. Асăннă пĕрлешĕвĕн директорсен канашĕн председателĕ Евгения Беликова хăнасене теплицăсемпе паллаштарнă, производствăна ÿстерме, тăкака чакарма пулăшакан çĕнĕлĕхсем пирки каласа панă. Агрофирмăра пахчаçимĕç туса илесси ÿссех пырать. Хальхи вăхăтра пурĕ 6890 тонна пуçтарса илнĕ. 2,2 гектар çинче çĕнĕ теплица тума пуçланă. Вăл кăçалхи юпа уйăхĕнче хута каймалла. Агрофирмăн хĕллехи теплицисем 25,62 гектар йышăнаççĕ. Михаил Васильевич предприяти теплица хуçалăхне çĕнетме укçа нумай хывнине, тухăçлăх ÿссе пынине палăртнă, çĕнĕ рыноксене тухма сĕннĕ.

Республика Пуçлăхĕпе Росстат ертÿçи Александр Суринов Шупашкар районĕнчи Çĕнĕ Тренкассинчи Павловсен хушма хуçалăхне те çитсе курнă. Çемье çулсерен вăкăрсем самăртса сутать. Чăх, кăркка усрать, улма-çырла, пахчаçимĕç, чечексем ÿстерет. Кил хуçи хĕрарăмĕ Светлана Александровна каланă тăрăх – йăран çинче ĕçлеме, пахчаçимĕçе çĕнĕ технологипе усă курса çитĕнтерме кăмăллать.

Çемье унччен сысна та усранă. Ĕне выльăх ашĕ хакланнă май вăкăрсем самăртма тытăннă. Продукци сутассипе те йывăрлăх çук. Килти хуçалăх Павловсене хушма тупăш илме, малалла аталанма пулăшать. «Çакăн пек çемьесене эпир яланах ырă тĕслĕх вырăнне хуратпăр», – палăртнă Михаил Васильевич.

### Информаци чăнлăхпа тÿр килтĕр

Чăваш Енри ĕçлĕ çулçÿрев программи тулли пулнине пăхмасăр Федерацин патшалăх статистика ертÿçи Александр Суринов республикăри массăллă информаци хатĕрĕсенче ĕçлекенсемпе пресс-конференци ирттерчĕ.

Росстат ертÿçи пирĕн республикăна килнин тĕллевĕ – ял хуçалăх çыравĕпе кăсăкланасси, халăх шухăшкăмăлне, ыйтусене мĕнлерех йышăннине пĕлесси. Пурнăç таппине кура статистика тишкерĕвĕ те вăхăт иртнĕ май улшăнать, çĕнелет. Кăçал акă малтанхи хут планшетлă компьютерпа усă кураççĕ. Чăн та, хальлĕхе вăл 20 пин çыруçă аллинче кăна-ха. Ыттисен вара машина вулакан çырав хучĕпех ыйтса пĕлме тивет. 2020 çулхи Пĕтĕм Раççейри халăх çыравĕ тĕлне çыруçăсене унпа туллин тивĕçтермелле. Пурĕ 200 пин планшетлă компьютер кирлĕ пулать. Халĕ техникăн çыраври тухăçлăхне, вăл мĕнле ĕçленине, усă курнă чухнехи чăрмавсене пĕлесшĕн.

Александр Суринов ялта пурăнакансем хуларисемпе танлаштарсан çырава лайăх хутшăннине асăнчĕ. Çапах вĕсен те шиклĕх туйăмĕ çухалман-ха. Лаптăк виçине, выльăх-чĕрлĕх йышне ыйтма пуçласан çынсем сартăк крепостла йĕркене, коллективизацие, Хрущев тапхăрĕнче налук тÿлеттернине аса илеççĕ. Чăн та, вăл вăхăта нумайăшĕ аслă ăру каласа панă тăрăх кăна пĕлет. Çапах вĕсем те налук хурасран иккĕленни сисĕнет. «Пирĕн çынсене ăнлантармалла: нихăçан та, пĕр çыравра та, СССР, патша, Ленин, Сталин, Брежнев, Хрущев, Горбачев тапхăрĕсенче те – конкретлă çын е çемье пирки информаци никама та паман, – палăртрĕ Росстат ертÿçи. – Ял хуçалăх, халăх çыравĕсемпе информаци саракан должноçри çынна саккунпа явап тыттараççĕ, уголовнăй ĕç пуçаричченех». Хăшĕ-пĕри килти выльăх, кайăк-кĕшĕк йышне çыруçăна тĕрĕс пĕлтерме килĕшменнисем те пур-ха, куç ÿкесрен хăраççĕ.

–Тĕрлĕ регионти çыруçăсем пĕрпĕринчен уйрăлса тăраççĕ-и? – ыйтрĕç мероприятие хутшăнакансем.

– Пурте пĕрешкелех, – терĕ Александр Суринов, – анчах переписчиксен лайăх хатĕрленмелле. Вĕсен калаçма, çынна ÿкĕте кĕртме пĕлмелле, йĕркеллĕ, асăрхануллă пулмалла. Ĕçе илнĕ çыншăн эпир яваплă.

Кăçалхи çырав çĕршыври йывăр лару-тăрура иртет. Çавна май тăкака палăрмаллах чакарма, ĕçе хăвăртлатмашкăн хăш-пĕр ыйтăва кăларма тивнĕ. Çав хушăрах унччен пулман ыйтусене те кĕртнĕ: çăмăллатнă кредитпа усă курни тата ытти те. Укçа-тенкĕ хĕсĕккипех аэрокосмос сăнÿкерчĕкĕсемпе усă курайманни. Вăл вара çырав чăнлăхне ÿстерме пулăшĕччĕ. Çыруçăсен йывăр та яваплă ĕçне шута илсе вĕсене 16200 тенкĕ тÿлĕç.

– Çыравра ыйтăва хуравлама килĕшменнисем пур-и? – кăсăкланчĕç журналистсем.

– Чăваш Енре ун пеккисем сахал. Эпир ĕçе вĕçлемен-ха, çыруçăсем вĕсем патне татах каяççĕ, ăнлантараççĕ. Çемьере пĕри хирĕçлесен тепри хуравлама хатĕр. Çырав пĕтнĕ тĕле ыйтусене хуравлама килĕшменнисен хисепĕ паллă пулĕ, – терĕ пресс-конференцие хутшăннă Чăвашстат ертÿçи Эльвира Максимова.

Ял хуçалăх предприятийĕсем, фермерсем кăтартусене электрон мелĕпе статистикăна тăратаççĕ. Вĕсем çакăншăн яваплă. Хушма хуçалăхсенчен, сад-дача хуçисенчен ыйтса пĕлме тивнĕ май чăрмавсем те тупăнаççĕ. Акă Сĕнтĕрвăрри районĕнчи граждансен коммерциллĕ мар сад пĕрлĕхĕнчи пĕр дача хуçи патне çыруçăн икĕ хут çитме тивнĕ. «Тумла чула шăтарать, – терĕ Александр Евгеньевич. – Иккĕмĕшĕнче тинех вăл ыйтусене хуравлама килĕшнĕ». Журналистсем çыраври тĕрĕслĕх пирки ыйтсан Росстат ертÿçи ăна ыйтупах хуравларĕ: «Респондент хуравĕн тĕрĕслĕхне мĕнпе танлаштарăн-ши?» Раççейре кăна-и, ют çĕршывсенче те ун пирки йĕркеллĕ калаймаççĕ-мĕн. Çырава пĕтĕмлетнĕ хыççăн кăна тулли информаци пулĕ.

**Лариса НИКИТИНА.**

---

ХЫПАР-ХĂНАР

## Ырă ĕçе пĕтĕмлетрĕç

**"Ачалăхшăн, ачалăх ячĕпе" ыркăмăллăх марафонне Пăрачкавра пĕтĕмлетнĕ.** Вăл нарăс уйăхĕнче старт илнĕччĕ. Марафон республикăра кăçал 20-мĕш хут иртрĕ. Унта 1680 çын хутшăннă. Пухмач 7 млн та 800 пин тенкĕпе пуянланнă, пĕлтĕрхинчен 600 пин тенкĕ ытларах.

Акцие хастар хутшăннисем: ЧР Пуçлăхĕн Администрацийĕ, "Акконд" пĕрлешÿ, Чăвашпотребсоюз, Шупашкарти 2-мĕш çăкăр завочĕ. Çавăн пекех ку енĕпе Пăрачкав, Комсомольски, Шăмăршă районĕсем палăрнă. Сăмахран, Пăрачкавсем марафона хутшăнса 357 пин те 414 тенкĕ пухнă. Ку укçапа нумай ачаллă, сахал тупăшлă çемьесене пулăшма усă курĕç. Çавăн пекех медицина хатĕр-хĕтĕрĕ, ача çурчĕсем валли çĕнĕ сĕтел-пукан, кĕнекесем, теттесем туянĕç, ача-пăча площадкисем тăвĕç, пултарулă çамрăксене ятарлă стипендипе хавхалантарĕç.

ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев пуçарăвĕпе марафонра пухăннă укçан пĕр пайне шкул волейбол лигине пулăшма усă курĕç. Кăçал Шупашкарти 61-мĕш шкулти волейболистсен команди виççĕмĕш вырăн йышăннă.

Хальхинче "Ача-пăча меценачĕ" медале Пăрачкав районĕнчи "Агрохимсервис" пĕрлешĕвĕн тĕп директорĕ Алексей Глуховпа Улатăр районĕнчи Первомайски вăтам шкул директорĕ Галина Белоусова тивĕçнĕ.

## 5 пин ытла çын сасăланă

**Шупашкарти Анне-монументне Раççей банкĕн çĕнĕ банкночĕ çинче сăнлама 5 пин ытла çын сасăланă.** Ăна 200 тата 2000 тенкĕлĕх купюра çине ÿкерме пултарĕç. Паллах, виççĕмĕш тур урлă ăнăçлă иртсен. Сасăлавăн юлашки тапхăрĕ кĕркунне пулĕ, ăна юпа уйăхĕн 7-мĕшĕнче пĕтĕмлетеççĕ.

Тĕп банк çĕнĕ купюрăсене тепĕр çул кăларĕ. Вĕсенче хăш хулана е символа сăнлассине Раççей халăхĕ татса парĕ.

Аса илтеретпĕр: Анне-монумента 2003 çулта вырнаçтарнă.

## РФ Президенчĕн премине тивĕçнĕ

**Раççей Президенчĕн "Вĕрентекенсене укçан хавхалантарасси çинчен" указĕпе килĕшÿллĕн республикăн конкурс комиссийĕ педагогсене 200 пин тенкĕ тÿлесе хавхалантармалли конкурса пĕтĕмлетнĕ.**

РФ Президенчĕн премине Чăваш Енĕн 10 вĕрентекенĕ тивĕçнĕ: Шупашкарти 5-мĕш гимназин историпе обществознанин вĕрентекенĕ Ленина Жукова, Çĕнĕ Шупашкарти 6-мĕш гимназин чăваш чĕлхипе литературин вĕрентекенĕ Нелли Краснова, Сĕнтĕрвăрринчи 1-мĕш гимназин географи вĕрентекенĕ Надежда Мазилкина, тĕп хулари 3-мĕш лицейре вырăс чĕлхипе литератури тата математика вĕрентекенĕсем Людмила Мельниковăпа Елена Сенькова, Тăвайри вăтам шкулăн биологи вĕрентекенĕ Альбина Михайлова, Шупашкарти 44-мĕш лицейре математика вĕрентекенĕ Елена Михайлова, Шупашкарти 2-мĕш лицейĕн химичи вĕрентекенĕ Надежда Мокеева, Красноармейскинчи вăтам шкулта пуçламăш классене ăс паракан Галина Никифорова, тĕп хулари 4-мĕш гимназин акăлчан чĕлхи вĕрентекенĕ Алевтина Филиппова.



# Кăлпасси е ...?

Халĕ лавккара мĕн кăна çук-тăр – куç алчăрса каять. Ĕлĕкрех талонпа виçеллĕ панă кăлпассие паян хуть килограмĕ-килограмĕпе туян. Шел, йышĕ пур та пахалăхĕ иккĕлентерет. Çынсем «докторская» кăлпассие ытларах кăмăлланине шута илсе кăçалхи çĕртме уйăхĕнче «Росконтроль» анлă саралнă 20 апат-çимĕçе тĕрĕсленĕ. Саккăрăшĕнче маркировкăра кăтартман хушма çимĕçсем тупнă. Сăмахран, Егорьевск хулинче хатĕрлесе кăларакан кăлпассире чăх ашĕ, сысна, чăх тирĕсем, выльăх белокĕ (коллаген), стабилизатор асăрханă. «Атяшево» брендлă кăлпасси те хушма апатпа пуян иккен: куккурус çăнăхĕ, чăх тирĕ. Вĕсене вара маркировкăра палăртман. Ахăртнех, сутăнмасран хăранă. Ачасем валли хатĕрлекен «Умка» кăлпассире вара ўсен-тăран сўсĕ – целлюлоза тупнă.

«Заповедные продукты» предприяти «ГОСТ Р 52196-2011» паллăпа усă курать. Анчах «любительская» кăлпассие каррагинан тата сысна тирĕ хушнă. Ку паллăпа килĕшўллĕн ун пек хушма çимĕçсем пулмалла мар. Чулхулари 1-мĕш аш-какай комбинатĕнче хатĕрлекен «2-20» кăлпасси çĕрулми крахмалĕпе, соя белокĕпе, каррагинан, шăмă, кăмăрчак юлашкийĕсемпе пуян.

«Раменский деликатес» брендлинче те «ГОСТ Р 52196-2011» паллăпа килĕшсе тăман каррагинан пулнă. Вăл хырăмлăх чирне пуçарать, усал шыçă аталанас хăрушлăха ўстерет.

Мĕншĕн çак ингредиентсене хушаççĕ? Çимĕçе йўнетме. Хушма япаласен хакĕ ашран самай пĕчĕкрех. Каррагинан, нўрĕ тытакан ытти хутăш кăлпассие йывăрлатаççĕ. Ўсен-тăран клетчатки, крахмал аш виçине сахаллатать. Çапла вара çынсем унран хатĕрленĕ кăлпасси вырăнне суррогат туянаççĕ.

# Пĕлни пăсмасть

Раççейре ытларах суя шыв сутасси анлă саралнă. «Росконтроль» кăтартăвĕпе кулерпа сутакан шывăн 90 процентĕ ĕçме юрăхсăр. Çурри ытла микробиологи тĕлĕшпе хăрушсăрлăха тивĕçтермест. Микробсен йышĕ унта бутылкăпа сутаканнинчен е кранри шывран та ытларах.

# Цифрăсемпе фактсем

2016 çулхи 4 уйăхра Раççее пальма çăвне илсе килесси 1462 процент ўснĕ. Пурĕ 294 пин тонна кўрсе килнĕ.

ПАХЧАÇĂ

# Шултра та, тутлă та

**Тухăçа ўстерме улма-çырла тĕммисене удобренипе апатлантармалла.**

### ЙĔПЛĔ ХУРЛĂХАН

10 л шывра (уйрăм савăтсенче) 5-10 г марганцовка, 2-3 г бор йўçекĕ (çĕçĕ вĕçĕпе), 30-40 г пăхăр купоросĕ ирĕлтермелле. Унтан çак шĕвексене хутăштармалла, тĕмме сирпĕтмелле. Выльăх тислĕкне шывпа (1:8 виçепе) хутăштармалла, 50-60 г суперфосфат тата 100-150 г кĕл хушмалла, шăвармалла. Çырла пиçнĕ чухне тĕмме кали тăварĕпе апатлантармалла: 10 л шывра 2 шăрпăк курупки чухлĕ ирĕлтермелле. 1 витре шĕвеке тĕмĕ варринчен тăкмалла. Капла тусан çырла тути, шăрши лайăхланать, вăрах упранать.

### ХĂМЛА ÇЫРЛИ

Тислĕке шывпа хутăштармалла (1:5 виçепе). Чăх-чĕп каяшĕ юрать, ăна валли шыв сахалрах кирлĕ (1:2). Пĕр витре удобрени 4-6 тĕмме çитет. Çырлана аталанма, унăн тутине лайăхлатма 1 тăваткал метра 150 г кĕл хывмалла. 10 л ăшă шывра 10 г типĕ çĕпре, 5 апат кашăкĕ сахăр ирĕлтермелле, 2,5 сехет тăрăлтармалла. Унтан шывпа 1:5 виçепе хутăштармалла. Удобренипе тўрех усă курмалла. Унсăрăн çĕпре тутлăхлă япалисене çухатать.

### ХУРЛĂХАН

Пысăк савăта хытнă çăкăр касăкĕ, çĕрулми хуппи, вĕлтĕрен, кукша пуç курăкĕ, мăян ярса шыв тултармалла. Çиелтен кленкăпа хупламалла. Хутăш йўçме тытăнсан 1 витре шыв хушмалла. Унпа çырла пиçнĕ вăхăтра тата ăна пуçтариччен 3 кун маларах шăвармалла. Тĕмĕ тавра касă тумалла, йĕпетнĕ çăкăр (2-3 кун маларах ислетни) касăкĕ, çĕрулми хуппи хумалла, çиелтен мочевина (10 г) сапмалла. Çĕре лайăх шăвармалла. Кун хыççăн çырла шултра, сĕтеклĕ пулать.

# Сад илемĕ – ирис



- Утă уйăхĕнче ирис куçарса лартмалла. Ку вăхăтра тымарĕ лайăх ўсет. Çакна 5 çулта пĕр хутчен тумалла. Унсăрăн тымарĕсем çитĕнсе пĕр-пĕринпе яваланаççĕ, тутлăхлă япаласем çитменнипе чечекленеймест.
- Чечек тĕммине чавса кăлармалла, тĕп тымарĕнчен çамрăк хунавсене уйăрмалла. Кашнинчех лайăх аталаннă тымар кирлĕ.
- Чечеке ăшăх лартмалла. Тымарĕ кăштах курăнса тăмалла. Лутра ўсекен чечексен хушши – 15 см, вăтаммисен – 25 см, çўллĕ пулаканнисен 45 см пулмалла.

ЫЙТУ – ХУРАВ

# Сысна курăкне пĕтерме

**Эпĕ 76 çулта. Хамăн пахча пур. Темиçе çул ĕнтĕ эпĕ сысна курăкĕпе (спорыш) кĕрешетĕп. Вăл пахчипех сарăлчĕ. Çак усал çумкурăка мĕнле пĕтермелле-ши?**

**Таисия ШАЛЬТЯМОВА. Йĕпреç районĕ, Пучинке ялĕ.**



Ытăва Муркаш районĕнчи **Владислав АНАНЬЕВ** агроном хуравлать:

– Сысна курăкĕ (горец птичий е спорыш) йывăç туни тавра, çул хĕрринче ўсет. Унран вăхăтра хăпмасан пахчана та пусса илет. Курăк тăршшĕ – 60 см. Сарăлсан ăна çумланин усси сахал – тымарĕ япăх касăлать, унран вара каллех çĕнĕ хунавсем тухаççĕ. Пахчипех сарăлсан гербицидпа кăна пĕтерме пулать. Акнă-лартнă лаптăкран пахчаçимĕç пуçтарса е утă çулса илнĕ хыççăн, кĕркунне, ўсен-тăранран хăпма вăйлă гербицид (гербицид сплошного действия) сапмалла. Вăл çумкурăка тымар таранах типĕтет. Икĕ эрнерен, лаптăкри курăк типсе хăрнă хыççăн, сухаласа сўрелемелле. Çуркунне хăрамасăрах унта акма-лартма юрать. Çак вăхăт тĕлне тăпрара хими препарачĕн сиенлĕхĕ пĕтет.

**Тепĕр мел.** Тăпрана мульча хывмалла, вăл çумкурăка сарăлма памасть.

ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ



# Ĕне çывăха ямасть

**? "Эпир ĕне усратпăр. Вăл мана çывăха ямасть, тапать. Хуçине – аннене – кăна мар, мана та йышăнтăр тесен мĕн тумалла?**

**Вероника САМСОНОВА. Етĕрне районĕ.**

Сĕт паракан ĕне яланхи йĕркене хăнăхнă выльăх шутланать. Çавăнпа хуçине итлет, хăнăхтарнă вăхăтпа апатласса, сĕт сăвасса, хăйне пăхасса кĕтет вăл. Мĕнле те пулин улшăнăва туйсанах ютшăнать. Çакна пула сĕт сахал антарма тытăнать.

Палăртнă вăхăтра тата тĕрĕс пăхсан ăна чиперех антарать. Хальчченхи йĕркене çирĕп пăхăнмалла.

Талăкра 30-35 кг сĕт параканни часах сисчĕвленет, пĕр вырăнта тăрасшăн мар. Апатланă, сунă тата ытти ĕç тунă чухне выльăха ачашламалла.

Вăл лăпкăлăха килĕштерет. Кăшкăрни, хыттăн калаçни, васкани ĕнене хăратать. Çавăнпа сĕт антармасть, тапасси йăлана кĕрет. Ют çынна пушшех те.

**Николай ШЕВЧЕНКО.**

# Ункă тăхăнтартмасăр

**? Сысна çĕре ытлашши ан чавтăр тесен сăмсине ункă тăхăнтартнине илтнĕ. Миçе çула çитсен çапла тăваççĕ? Мĕнле пралукпа усă курмалла? Ĕçе пурнăçлама йывăр-и?**

**Елена ЛИСОВА. Канаш районĕ.**



Эпĕ ĕмĕр тăршшĕпе сысна усратăп, çавăнпа сире çапла хуравласшăн: сысна ахальтен çĕре чавмасть, вăл ирĕкре хăйне валли апат шырать. Çут çанталăк выльăха çапла туса янă.

Çĕре ытлашши ан чавтăр тесен лайăх апатламалла. Унсăр пуçне выляма мĕнле те пулин тетте (сысна пĕчĕк ача пекех) кирлĕ. Маччаран сăнчăр çакса яма юрать, тăршшĕне вăл выльăх çурăмне перĕнтĕр. Çак меслетпе хам та усă курнă, пулăшать.

Сăмсине пралук тăхăнтартса ăна нушалантарни кăна. Çакă сыснана ўсме, ўт хушма чăрмантарать. Унсăр пуçне инфекци лекме те пултарать. Кун хыççăн сиплемешкĕн тăкакланма тивĕ.

**Мария ИЛЬИНА. Улатăр районĕ.**

# Витамин çитменрен

**? Килти хушма хуçалăхра усракан кроликсем пĕр-пĕрне çиесшĕн пулнине асăрхарăмăр. Каннибализмран мĕнле хўтĕленмелле?**

**Еленăпа Владимир МАКАРОВСЕМ.**

Çут çанталăкра пĕр ушкăнри чĕрчунсем пĕр-пĕрне çинине (каннибализм теççĕ) сайра мар тĕл пулатăн. Сывви аталанса ĕрчет, вăйсăрри пĕтет. Анчах ял хуçалăхĕнче усă куракан чĕрчунсем, чăх-чĕп, кроликсем хушшинче каннибализм белок, апатра питĕ кирлĕ аминойўçексем, витаминсем, макро тата микроэлементсем, унсăр пуçне ĕçмелли шыв çитменрен пуçланать.

Çăварламалли амасемпе çамрăк кроликсене кунсерен таса шыв ĕçтермелле тата 15-20 мг метионин памалла. Унсăр пуçне каннибализм паллине асăрхасан апата кунсерен 1 г минерал серипе тата 2-3 мг йодлă калипе пуянлатмалла, 7-10 талăк çитермелле.

Апатламалли йĕркене пăхăннисĕр пуçне выльăха хуралтăра ирĕклĕх кирлĕ, санитари условийĕ пулмалла, чĕрчунсем сусăрланасран асăрханмалла.

**Петр ПАВЛЕНКО.**

ТĔПЕЛ

# Хăяр тăварлатпăр

### ХУРЛĂХАНПА

*Кирлĕ пулать (1,5 – 2 л валли): 1 кг хăяр, 250 г хĕрлĕ хурлăхан. Кашни банкăна: 4 турат пыл куракĕ (мелисса), 1 лавр çулçи, пĕрчĕллĕ 10 пăрăç, хĕрен çулçи, 1 пуç ыхра. Маринад валли (1 л шыва): 1 апат кашăкĕ сахăр, 2 апат кашăкĕ тăвар, 1-2 стакан уксус (9 процентли), 20 мл шурă эрех.*

1. Хăяра 4 сехет сивĕ шывра тытмалла.

2. Кашни банкăна техĕмлĕх, хăярпа хĕрлĕ хурлăхан тултармалла, вĕрекен шыв ямалла. Хупăлчине хупса сивĕниччен лартмалла. Маринад хатĕрлемелле. Икĕ хутчен вĕретсе банкăна ямалла.



### ПАНУЛМИПЕ

*Кирлĕ пулать (2,5-3 л валли): 1 кг хăяр, 700 г панулми, 1 пуç ыхра, хурлăханпа чие çулçи (5-шер), техĕмлĕ тата пĕрчĕллĕ хура пăрăç (5-шер), 1 çупкăм укроп, 2 апат кашăкĕ тăвар, 1 апат кашăкĕ сахăр, 2 апат кашăкĕ панулми уксусĕ.*

1. Панулмие 4 пая касмалла. Банкăна чиепе хурлăхан çулçисем, ыхра, техĕмлĕх, укроп, çиеле хăярпа панулми тултармалла.

2. Шыва сахăрпа тăвар ярса вĕретмелле, уксус хушмалла. Вĕрискере хăяр банкине ямалла. Марльăпа витсе пÿлĕмре талăк лартмалла. Унтан пластмасса хупăлчапа хупмалла, сивĕ вырăнта упрамалла.

### МАРИНАДЛАНĂ САЛАТ

*Кирлĕ пулать (1л валли) : 1 кг хăяр, 500 г пуçлă сухан, хĕрен тымарĕ, 1 пуç ыхра, пĕрчĕллĕ тата техĕмлĕ хура пăрăç (5-шер). Маринад валли: 2,5 апат кашăкĕ тăвар, 1 апат кашăкĕ сахăр, 4 апат кашăкĕ уксус (9 процентли), 10 апат кашăкĕ ÿсен-тăран çăвĕ.*

1. Хăярпа ыхрана çаврашкан, сухана çурма çаврашкан, хĕрен тымарне касăкпа турамалла.

2. Пурне те кастрюле тултармалла, техĕмлĕх, маринад валли хатĕрленĕ çимĕçсем ямалла, хутăштармалла, пÿлĕмри температурăра 8 сехет лартмалла. Унтан çулăм çинче 2 минут вĕретмелле (вĕреме кĕнĕ хыççăн).

3. Вĕри салата банкăна тултармалла. Сивĕнсен сулхăн вырăна лартмалла.

СĔНŸ

## Кастрюль

Кастрюль тĕпĕ çунсан шыв, кĕпе супăнĕ ярса 3 минут вĕретмелле.

## Ĕне çăвĕ

Ĕне çăвне чĕркемрине туянма тăрăшмалла: виçсе сутмалли йÿнĕрех пулсан та пахалăхĕ иккĕлентерет.

## Духовка

Вараланнă духовкăна каçхине нашатырь спирчĕпе йĕпетмелле. Ирхине нÿрĕ çĕтĕкпе е губкăпа сăтăрмалла.

## Хĕрен

Хĕрене çĕр каçа сивĕ шыва ярса лартмалла. Е морозилкăра кăштах тытмалла. Кун хыççăн ăна аш арманĕпе авăртма çăмăлрах. Куçа кĕресрен аш арманне полиэтилен пакет тăхăнтартмалла.

ЧИПЕРЛЕНЕР-И?

## Илемлĕ çÿç

Çулла хĕртсе пăхакан хĕвел çÿçшĕн сиенлĕ. Кун пек чухне пуçа хуплама тăрăшмалла. Çÿç илемлĕхне тавăрма маскăпа усă курма сĕнесшĕн. Сăмахран, куршанак е олива, е сырлан çăвĕсене сĕрсе 20 минут тытмалла. **Тепĕр мел:** çÿлерех асăннă çусенчен пĕрне илмелле, савăта ярса шыв мунчинче ăшăтмалла. 1-2 тумлам эфир çăвĕ хушмалла. Маскăна çÿç вĕçне сĕрмелле, пуçа полиэтилен пакет тăхăнмалла, хулăн алшăллипе чĕркемелле. 20-30 минутран ăшă шывпа, шампуньпе çумалла.

ПĔЛМЕ КĂСĂК

## Ватăлтарать те, çамрăклатать те

Сасă – çынпа паллаштаракан тĕп пай. Ахальтен мар тĕнчери чи пысăк банксенче сейфсенчен чылайăшне парольпе мар, хуçин сассипе çыхăнтарнă. Вăл урăхла янăрасан кĕтнĕ алăк уçăлмасть.

Ĕлĕкхи Италире çапларах йĕрке пулнă: паспортра тĕрлĕ паллăсăр пуçне сасă тембрне те кăтартнă.

Палăртнă тăрăх – çут çанталăк панă сасă тембрне улăштараймăн. Çакăнпа килĕшмелле, уйрăмах – калаçăва шута илсен. Мĕншĕн тесен ытларах чухне пирĕнтен кашни хăйне килĕшнĕ пек калаçать, çут çанталăк панă сасса улăштарма тăрăшмасть. Анчах çакна шута илмелле: тарăхни, хărани калаçакан çын сассине ватăлтарать, савăнăç тата сасă лăпкăн янăрани – çамрăклатать.

ТĔН КĔТЕСĔ

## Вĕренес умĕнхи кĕлĕ

Эй Çÿлти Патша, Эсĕ чуна лăплантаратăн, Эсĕ тÿрĕ Сывлăш, Эсĕ пур çĕрте те пур, Эсĕ пурне те пултаратăн, пур ырăлăх та Санран тухать, чĕрĕлĕх те Эсĕ паратăн: пирĕн ăша кĕрсе вырăнаç, пур усалтан та тасат пире, ырă Турă, пирĕн чунсене çăл.

## Вĕреннĕ хыççăнхи кĕлĕ

Эй Турра çуратнă Хĕр, Сана асла хурса хисеплеме тĕрĕс тивĕçлĕ, Эсĕ пирĕн Туррăн ĕмĕр мухтавлă Таса Амăшĕ. Эсĕ Херувимсенчен те аслă, Серафимсенчен те мухтавлă, Эсĕ хĕр хальлĕн Сăмах Турра çуратнă, Эсĕ Турă Амăшĕ, Сана аслăлатпăр.

САНАВСЕМ

✓ Автан пÿрт умне килсе авăтсан хăна килет теççĕ.

✓ Куккук Питрав иртсен нумай авăтмасан кĕр типĕ, кĕске килет, час пăрахмасан – йĕпе, вăрăм.

✓ Пÿрт пуçне чĕкеç йăва çаврăсан – пуясса.

✓ Каçхи апат çинĕ хыççăн чашăктирĕке çумалла. Çĕрлене çумасăр хăварсан хĕрт-сурт çиллентет, шавлать теççĕ.

✓ Выльăха шăпăрпа çапсан хĕсĕр пулать.

ТĔЛĔКСЕМ

♦ Вĕçни – телее, пурнăç ăнăçлă пуласса.

♦ Йĕрсен савăнмалла пулать теççĕ.

♦ Йĕппе çип – юратăва.

♦ Лаша кÿлни – качча каясса.

♦ Пир е ал шăлли – çула тухасса.

♦ Çум çумлани – йывăрлăхсем сахалланасса.

СЫВЛĂХ

## Çамрăклăх çимĕçĕсем

**Хĕрлĕ кăшман** организма тасатать. Ăна чĕрĕлле çиме тăрăшмалла. Кун пек чухне ÿт-тир клеткисем хуллен ватăлаççĕ.

**Петрушка** – организмшăн хаклă ÿсен-тăран. Унта ватăласран упракан япаласем пур.

**Кавăн вăрри** цинкпа пуян. Вăл çыншăн çав тери кирлĕ микроэлемент шутланать. Унсăр 80 фермент япаласен ылмашăвне хутшăнаймасть. Кавăн вăрри иммунитет тытăмне çирĕплетет, арçынсен сывлăхĕшĕн, çÿç тăкăннинчен лайăх.

**Пулă çăвĕ** ÿт-тире якатать, пĕркеленчĕксене тикĕслет. Унта А тата Д витаминсем, çавăн пекех омега-3 çуллă йÿçек пур. Вĕсем шухăш-кăмăл пусăрăннине сиплеççĕ, ăс-тăна çирĕплетеççĕ.

Талăкра 10-15 **миндаль** çини юн тымарне çирĕплетет.

**Томат пасти** помидортан усăллărах. Унта ликопин пур. Вăл шыçă чирĕсенчен упрать.

**Лимон** организмран наркăмăшсене кăларать.

**Хаяр тымарĕ** (имбирь) ÿт тăртаннинчен пулăшать, лимфа ĕç-хĕлне йĕркелет, вăй-хала çирĕплетет.

## Гипертонирен

■ 1 пуç сухан, 4 шăл ыхра илмелле, вĕтетмелле, вĕретсе сивĕтнĕ 5 стакан шыва ямалла, савăт хуппине хупса вăйсăр çулăм çине лартмалла, 15 минут вĕретмелле. 1-шер апат кашăкĕ вĕтетнĕ укроп, петрушка тата шурлăх туни (сушеница болотная) хушмалла, тепĕр 15 минут вĕретмелле, 1 сехет тытмалла, марля витĕр сăрăхтармалла. Сиплев курсĕ – 10 кун. Виçĕ эрне тăхтанă хыççăн тепĕр 10 кун ĕçмелле. Шĕвеке холодильникра 5 кун упрамалла.

■ 1-шер стакан кăшман, кишĕр, хĕрен (теркăпа вĕтетнĕ хĕрене шывра 36 сехет тытмалла) сĕткенĕсем илмелле, 1 лимон сĕткенĕ тата 1 стакан пыл хушмалла. Кунне 2-3 хутчен апат умĕн 1 сехет маларах е çинĕ хыççăн 2-3 сехет каярах 1-шер апат кашăкĕ ĕçмелле.

## Йăран çинчи эмелсем

❖ Купăста çулçи пуç ыратнине чарать.

❖ Баклажан организмран сиенлĕ холестерина кăларать, чĕре ĕçне йĕркелет, юн пусăмне чакарать.

❖ Хăяр юна тасатма пулăшать, пĕвер чирĕнчен сиплет.

❖ Кишĕр куçа çивĕчлетет, пĕвер, пÿре чирĕсенчен аван. Ытларах ачасемшĕн усăллă.

❖ Çарăк типĕ ÿслĕке сиплет. Унпа пыр, шăл ыратсан усă кураççĕ. Иммунитета çирĕплетет.

❖ Помидор – арçынсемшĕн сиплĕ çимĕç. Шăк хăмпи çуменчи ар парĕ шыçасран упрать.

❖ Кабачок организмри наркăмăшсене кăларать, атеросклероз чирĕнчен сыхлать, юн пусăмне пĕчĕклетет.

❖ Арпуса артритпа, подаграпа, сахăр чирĕпе, гастритпа нушаланакансен ытларах çимелле Унăн хуппи те, вăрри те усăллă.

**Вăрăм ĕмĕрлĕ пулас тесен хăвăр ĕçе юратмалла. Мĕнпе те пулин кăсăкланмалла: сад-пахчара киленĕç тупмалла, алĕç тумалла, çулçÿреве тухмалла, ачасемпе савăнмалла тата ыт.те.**

*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*

УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Утă, 21 – кĕçнерникун | Утă, 22 – эрнекун | Утă, 23 – шăматкун | Утă, 24 – вырсарникун | Утă, 25 – тунтикун | Утă, 26 – ытларикун | Утă, 27 – юнкун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 3.35 | 3.37 | 3.39 | 3.40 | 3.42 | 3.44 | 3.46 |
| | анать | 20.18 | 20.16 | 20.15 | 20.13 | 20.11 | 20.10 | 20.08 |
| Кун тăршшĕ | | 16.43 | 16.39 | 16.36 | 16.33 | 16.29 | 16.26 | 16.22 |
| УЙĂХ | тăхри | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать |
| | кунĕ | 17-мĕш кун | 18-мĕш кун | 19-мĕш кун | 20-мĕш кун | 21-мĕш кун | 22-мĕш кун | 23-мĕш кун |
| | | Шыв тăкан паллинче | Пулă паллинче | Пулă паллинче | Пулă паллинче | Сурăх паллинче | Сурăх паллинче | Вăкăр паллинче |

*ĔÇ ÇЫННИН ÇУЛТАЛĂКĔ*

# Янаварăм ман, янаварăм, Эп сана йĕвентен ямарăм...

Валериан Константинов Красноармейски районĕнчи Вăрманкас Алманч ялĕнче çуралса ÿснĕ. Çакăнтах тĕпленнĕ, халĕ те ватлăх кунĕсене кунтах ирттерет.

– Пĕлетĕр-и, – тет ватă. – Маншăн Вăрманкас Алманчран пахарах ял çук. Кунта – вăрманлă, çырла-кăмпаллă, илемлĕ вырăнсем. Пĕве тĕлĕшпе те пуян, вĕсенче пулă чылай.



Сакăр теçетке çул сахал вăхăт мар, ăна сакăр кунпа танлаштараймăн. Çак тапхăрта хура-шур нумай куртăм эпĕ. Çуралнă ял, тăван хуçалăх ман куç умĕнче аталанса вăй илчĕç. Хам ĕмĕрте висĕ пÿрт лартрăм. Халĕ пурăнаканнине ял халăхĕпе нимелле хăпартрăмăр.

Ултă пĕртăван çитĕннĕ вĕсем. Минькапа Клементий ку тăрăхри ăста тимĕрçĕсем пулнă. Герăпа Миша та тăван хуçалăхра ĕçлесех телей тупнă. Шел, кун-çулĕ вăхăтсăр таталнă вĕсен. Аппăшĕ Юля Шупашкарта пурăнать.

Супар шкулĕн тăватă класне çеç пĕтернĕ Валериан. Мĕншĕн тесен вăрçă хыççăнхи пурнăç çăмăл пулман. Икĕ алла пĕр ĕç тенĕ евĕр «Сила» колхозра вăй хума тытăннă. Ăна бригада лашисене пăхма шаннă.

– Эпĕ янаварсене питĕ юрататтăм, килĕштернĕ ĕç урăх çукчĕ. Бригадăра 25 лашаччĕ. Хĕлле тихасене турта хушшине тăма вĕрентеттĕмĕр, çулла вара выртмана çÿренĕ. Ăйăра та хамăр патрах çитĕнтернĕ эпир.

Лашасăр алă-урасăр пекех туйăннă ун чухне. Пĕтĕм ĕçе унпа пурнăçланă. Пахча сухаламалла-сÿрелемелле, çĕрулми лартмалла, утă-улăм турттармалла, арман авăртмалла, тислĕк тăкмалла... Хăнана та янаварпа кайнă. Унсăр пуçне кĕркунне-çуркунне салтак юрри янратса яшсемпе ял-ял тăрăх çÿренĕ. Миçе çамрăка çара ăсатман-ши вăл?

1957 çулта Вăрманкас Алманч каччин хăйĕн салтак ячĕ тухнă. Валериан Константинов çĕршыв умĕнчи тивĕçе чыслăн пурнăçланă. Ленинградри инженери çарĕсенче висĕ çул салтак пătти çинĕ.

Хĕсмет хыççăн чунĕ хулана туртман унăн, фермăна ĕçе вырнаçнă. 1960 çулта Супар хĕрĕпе Евдокия Васильевăпа пĕр çемье пĕрлешнĕ. Мăшăрĕ те хăй пекех мĕн пĕчĕкрен ĕçе юратса ÿснĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнчех фермăра ĕне сунă. Каярахпа Вăрманкас кинĕ вăкăр самăртнă çĕрте вăй хунă. Кил хуçи вара юратнă лашисене пăхма кÿлĕннĕ. Ăна 30 яхăн ут шанса панă.

– Унтанпа чылай вăхăт хыçа юлчĕ. Çур ĕмĕре яхăн конюхра ĕçлерĕм эпĕ. Шел, хуçалăхра паян пĕр лаша та çук, çынсем те усрамаççĕ ăна. Çакăншăн чун ыранта мар. Хам пăхнă янаварсене ятран та асăнма пултаратăп: Добрый, Звонок, Бион... Вĕсемпе районта хĕл ăсатма мĕн чухлĕ хутшăнманши? Самуил Петров урапа-çунана юсаса тăратчĕ. Эпĕ вара лаша тăлли, тилхепе яваттăм. Пăяв-вĕрен те чылай хатĕрленĕ, ял-йыш ыйтăвне те тивĕçтернĕ.

